Тукташ И. Поэтăн юлашки юрри: [сăвă] / И. Тукташ // Чăваш коммунĕ. – 1940. – 19 юпа.

# ПОЭТĂН ЮЛАШКИ ЮРРИ

Кичем пĕр пӳлĕм. Чӳречисем ун тăвăр,
Хĕвел салхуллăн кăна ӳкет ку пӳлĕме.
Поэт выртать... Чĕри васкавлăн, хăвăрт
Шаккать касхи кичемлĕхе пӳлсе.

Поэт выртать. Ун чирлĕ сăн-сăпачĕ
Вилĕм мĕлкийĕ йевĕр сĕмленет.
Ĕмĕтĕнче кăна чĕр пурнăç хăвачĕ
Хĕрӳн кăпăкланса вĕриленет.

Ун пуçĕнче татти-сыпписĕр шухăш
Пĕр чăрсăррăн, пĕр хурлăхлăн вĕркет.
Суранлă чунхавалĕпе пĕр хутăш
Çырман сăвă пуçра йĕркеленет:

«Çак тĕнчере эп этеме питех юратрăм,
Вăйли те çук вăл этемрен тесе.
Ун ячĕпе мухтав юррийĕсем шăратрăм,
Çын хуйхине куççулĕмпе ирĕлтерсе.

Ни ултава, ни элеке халиччен шанман эп,
Этем чĕри тасах тесе ĕненнĕ.
Тĕнче хăй те ман сасăма ăнланĕ
Тесе ăшри ӳпкевĕме сӳнтернĕ...

Ĕмĕтсем çитес куна телейлĕн
Ыткăнайса тухма пиkennĕ пулĕ.
Ăçтан пĕлен? Ăна нимле пĕлеймĕн,
Те çăлăнăç кĕтет, те савăнăç куççулĕ...

Тен ак ырак-паян тӳнсе эп кайăп
Çил тăвăлпа тӳнен хăрăк турат
манерлĕн.
Сăлтав ăçта? Камра шырас-ха айăп?
Чир сăлтавне епле тытса йĕнерлĕн?

Епле хăр ĕмĕтпе кăна патвaррăн
Хура элчел вăйне çапса аркатăн?
Эп халь этем хакне илтсе курмарăм,
Çампа шурса пырать ман сăн-сăпатăм.

Çампа иккен асап тĕтриййĕ витĕр
Пӳрмен телейĕме салхун йĕрлерĕм.
Мĕскĕн тĕнче чурисенчен пĕри те
Çапах тăлăх поэт ятне пĕлмерĕç...

Камах мĕскĕн поэт ятне çăласшăн
Масар çине кăвак чечек пырса пăрахĕ?
Ку чыс пулман, пулас та çук чăвашшăн,
Чĕрем, чĕрем! Ӳпкелешсе йĕме пăрах эс!

Айван чĕрем ăçта тапса сикетĕн?
Курмастăп-им, хавшать кунçул кĕперĕ,
Сисместĕп-им, — минутăн та сехетĕн
Епле çĕрсе пырать ӳпке-лĕверĕм...

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Хам халăхăн пуласлăхне шанса çеç
Çак вĕçленмен юррăмсене хуратăп.
Пулас ăру-йăхсем кăна ăнланĕç
Поэт ма юлнине тăлăх-туратăн...

Çитес тĕнче çынни кăна ман тусăм
Пулса янратĕ çак юрра хĕвел тавра.
Вăл маншăн — пурнăç, вăл маншăн
—сăвă-муза,
Анчах эп хам камне ăнланĕç-ши вара?»

И. ТУКТАШ.